Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви
Шупашкар хула администрацийĕн вĕренӳ управленийĕ
«Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 50-мĕш вăтам шкул» муниципалитетăн пĕтĕмĕшле вĕренӳ бюджет учрежденийĕ

Урок теми:

«Çулталăкăн пур вăхăчĕ те илемлĕ»

Урок авторĕ:
Павлова Марта Михайловна,
Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан
50-мĕш вăтам шкулта
чăваш чĕлхине вĕрнтекен

Шупашкар – 2016

Вырӑс шкулӗн 6А класӗнче мультимедиа хатӗрӗсемпе усӑ курса
ирттермелли чӑваш чӗлхи урокӗн конспекчӗ

Урок теми: çулталӑкӑн пур вӑхӑчӗ те илемлӗ

***Урок тӗсӗ*:** хутӑш урок.

Урок тӗллевӗ: ачасен чӑвашла пуплевне пур енлӗн аталантарасси, пӗчченшерӗн тата ушкӑнпа ӗçлеттерессии.

Задачӑсем: 1) пӗр йышши членсене çырура чарӑну палли лартса уйӑрмалли çинчен аса илсе çирӗплетесси;

2) çулталӑк вӑхӑчӗсем çинчен мӗн пӗлнине аса илсе пӗтӗмлетсе хӑварасси;

3) çулталӑкӑн пур вӑхӑчӗ те илемлӗ пулнине курма вӗрентесси, тӑван тавралӑха сӑнама тата юратма вӗрентесси .

Усӑ курнӑ технологисем: информаципе хутшӑну технологийӗсем, сывлӑха сыхлас технологисем, проблемӑллӑ тата аталантару технологийӗсен элеменчӗсем, ушкӑнра хутшӑнса ӗçлесси.

Урок мелӗсемпе меслечӗсем: учитель сӑмахӗ, кӑтартуллӑ вулав, ачасен илемлӗ вулавӗ, словарь ӗçӗ, ыйту-хурав, пӗчченшерӗн калани, хорпа калани, слайдсемпе усӑ курни, сӑмах майлашӗвӗсем, предложенисем йӗркелени, çыхӑнуллӑ калав йӗркелени, диалог тӑвасси, ушкӑнсенче ӗçлесси, валеçӳ карточкисемпе усӑ курни, тишкерӳ-пӗтӗмлетӳ .

Пуплев хӑнӑхӑвӗсем: сасӑсене тӗрӗс каласси; ыйтусем парас, хуравлас, илемлӗ те тӗрӗс вулас хӑнӑхусене аталантарасси; сӑмах йышне пуянлатасси, çыхӑнуллӑ пуплеве аталантарасси .

***Чӗлхе теорийӗ*:** пӗр йышши членсемпе калаçу тата çыру пуплевӗнче тӗрӗс усӑ курасси.

Словарь ӗçӗ:

хӗрелме пуçлать – начинает румяниться
пиçсе çитеççӗ – созревают

наркамашлă – ядовитый
икшерĕн вырнаçнă – расположены по две
кашкăр çырли – крушина

Кирлĕ хатĕрсем: компьютер, мультимедиа проекторĕ, экран, слайдсем, валеçу карточкисем.

Урок эпиграфĕ: Малтан шухăшла, кайран кала!

Усă курнă литература:

1. Абрамова Г.В. Чăваш чĕлхи: вырăс шкулĕн 6-мĕш класĕ валли / Г.В.Абрамова. – Шупашкар: Чăвш кĕнеке изд-ви, 2014. – 271с.

2. Виноградов Ю.М., Виноградова Г.М. Орфографи словарĕ. Тĕрĕс çырмалли правилăсем. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕрентӳ институчĕн редакципе изд-во пайĕ, 2002. – 304 с.

Урок юхăмĕ

Ĕç тапхăрĕсем	Вĕрентекен ĕçĕ	Ачасен ĕçĕ
I. Класа урока хатĕрлесси **Ачасем умне проблемăллă ыйту каларса тăратни**	1) Шăнкăр-шăнкăр шăнкăрав, Акă иртрĕ те тăхтав. Тăрăр парта хушшине, Пуçлар чĕлхе урокне. – Сывлăх сунатăп, ачасем! Пирĕн шкул умĕнчи йывăç çине ирех чакак килсе ларнă. Чакăлтать те чакăлтать паçăртанпах. Мĕне пĕлтерет-ши çак? – Чăнах та, пирĕн пата хăнасем килнĕ. Хăнасем	2) Пĕрре, иккĕ, виççĕ,тăваттă Пуçа çӳлелле çĕклер, Паян пурте тăрăшсан «Пиллĕк» паллăсем илер. (Хорпа калаççĕ) – Сывлăх сунатпăр, вĕрентекен. – Чакак килсен хăна килет теççĕ.

Урок эпиграфĕпе паллаштарасси **Фонетика зарядки.**	енне çаврăнса сывлăх сунар-ха пурте пĕрле. –Ачасем, сирĕн паян мĕнлерех кăмăл? – Апла пулсан урока пуçлар. – Доска çинчи чи çӳлти предложенине пурте харăс вулатпăр. Ку вăл пирĕн урок эпиграфĕ. – Апла пулсан шухăшламасăр калаçар мар паянхи урокра. – Халĕ ачасем, чĕлхене якатса илер. Ман хыççăн пурте пĕрле калатпăр.	– Сывлăх сунатпăр, хăнасем. Ачасем шăпланса лараççĕ. – Паян пирĕн лайăх кăмăл. (Пурте пĕрле калаççĕ) *«Малтан шухăшла, кайран кала!»* (Пурте пĕрле калаççĕ) Не-не-не – çитрĕ кĕркунне. Еççĕ-еççĕ-еççĕ – çулçăсем ӳкеççĕ. Лĕ-лĕ-лĕ – илемлĕ-çке хĕлле. Атăп-атăп-атăп – эпĕ савăнатăп.
II. Урок темипе, тĕллевĕсемпе паллаштарасси	– Паянхи урокăн темине юрăран пĕлме пулать. «У природы нет плохой погоды» юрă янăрать. У природы нет плохой погоды – Каждая погода благодать. Дождь ли снег – любое время года Надо благодарно принимать. – Тĕрĕс калатăр. Паян урокра эпир çулталăкăн вăхăчĕсем çинчен калаçăпăр, пĕр йышши членсем çинчен аса илĕпĕр. Урока ăнăçлăрах ирттерес тĕллевпе эпир сирĕнпе ушкăнсемпе ĕçлĕпĕр.	– Паян эпир çулталакăн вăхăчĕсем çинчен калаçăпăр. Юр е çумăр çăвать-и, çав-çавах çанталăк илемлĕ.
III. Çĕнĕ темăна вĕренме	– Халĕ паянхи çанталăк çинчен калаçапăр. Ачасем, пурте урама пăхăр-ха, халĕ çулталăкăн	– Халĕ кĕркунне. Хĕл çывхарса килет. – Урамра юр çăвать.

хатĕрлесси **Умĕнхи калаçу** **К.Ивановăн săввине ачасемпе ушкăнсем çине пайланса вуласси** **Аудировани**	хăш вăхăчĕ? – Хĕл çывхарса çитнине ăçтан пĕлетпĕр? – Çанталăк епле тăрать? – Тўпе мĕн тĕслĕ? – Çил вĕрет-и? – Мĕнле çил вĕрет? – Кайаксем ăçта вĕссе кайнă? *1-мĕш ушкăн* Шурă юр ирĕлет, Çеçен хир чĕрĕлет, Ĕшĕл курăк ўсет… Вăл хăçан пулать-ши? (çуркунне) *2-мĕш ушкăн* Хĕвел хытă хĕртет, Ăшă çил вĕркелет, Сар ыраш çитĕнет… Вăл хăçан пулать-ши? (çулла) Кашни ушкăн хăйне уйăрса панă текстăн пайне тимлĕ итлесе каласа парать. К.Ушинский çырнă «Тăвата ĕмĕт» калава пайăн-пайăн вуласа паратăп. 1) Хĕл пулнă. Мĕтри пăр тавайкки çинчен çунашкапа яраннă. Ярăнса ывăнсан, вăл киле хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе таврăннă та ашшĕ çумне пырса ларнă. «Эх, атте, хĕлле епле аван, питĕ савăк! Яланах хĕл пулсассăн эпĕ питĕ хĕпĕртеттĕм», тенĕ вăл ашшĕне. Ашшшĕ Мĕтри сăмахесене çырса	– Çанталăк сивĕтет. – Тўпе сăрă. Сивĕ çил вĕрет. – Кайăксем кăнтăра вĕçсе кайнă. (Çанталăк çинчен пĕр-пĕр ача çыхăнуллă каласа парать) *3-мĕш ушкăн* Хир илемĕ каять, Сĕм вăрман çаралать, Пĕрмай çумăр çăвать… Вăл хăçан пулать-ши? (кĕркунне) *4-мĕш ушкăн* Хирсенче юр анчах, Çырмара пăр анчах, Сивĕтет аванах… Вăл хăçан пулать-ши? (хĕлле) 3) Çу çитрĕ. Мĕтрипе ашшĕ утă çулма кайнă. Ача кунĕпех савăнса çўренĕ: кăмпа пуçтарнă, çырла татса тултарнă, типĕ утă çинче йăваланнă. «Çăвăн вĕçĕ нихçан та пулминччĕ!», – тенĕ вăл ашшĕне каçхине. Ашшĕ Мĕтрин ку сăмахесене те çырса хунă. 4) Кĕр çитнĕ. Çынсем пахчара çимĕçсем, хĕп-хĕрлĕ

Ӱкерчĕклĕ калав тăвасси **Ӱкерчĕк тăрăх çыхăнуллă калав тăвасси**	хунă. 2) Çуркунне çитнĕ. Мĕтри ула-чăла лĕпĕшсем хыççăн чупса киленнĕ, чечексем татса тултарнă, ашшĕ патне чупса пынă та: «Епле аван иккен çуркунне!» ‑ тенĕ. Ашшĕ Мĕтрин ку сăмахĕсене каллех çырса хунă. *Пĕтĕмлетӳ:* ачасем, хăш çулталăк вăхăчĕ чи лайăххи – ши? ‑ Çуркуннехи уйăхсем мĕн ятлă? (Доска çине кашни ушкăн çулталăк вăхăчĕпе суйласа илсе ӳкерчĕксем, хатĕр панă предложенисене суйласа илет, çыхануллă каласа парть)). *Кĕрĕн паллисем:* час-часах çумăр çăвать. Йывăç çулçисем çĕр çине ӳкеççĕ. Кайăксем кăнтăра вĕçсе каяççĕ. Хĕлĕн паллисем: *юр çăвать, урамра сивĕ, ачасем йĕлтĕрпе ярăнаççĕ.* Çуркуннен паллисем: *юр ирĕлет, урамра шыв юхать, кайăксем вĕçсе килеççĕ.* Çу паллисем: ачасем шыва кĕреççĕ. Çырла пуçтараççĕ. Пулă тытаççĕ. (Предложенисене анлăлатса çыхăнуллă каласа параççĕ.) Хĕллехи уйăхсем: раштав, кăрлач, нарăс. Çанталăк сивĕ тăрать. Шурă юр çăвать. Ачасем	панулмисем, сарă грушăсем пуçтарнă. Мĕтри тем пек хавасланнă. «Кĕркунне вăл çулталăк вăхăчĕсенчен чи лайăххи! – тенĕ вăл ашшĕне. Ашшĕ ачин сăмахĕсене çырса пынине кăтартнă та Мĕтрие вăл хĕл çинчен те, çуркунне çинчен те, çу çинчен те çавăн пекех каланине вуласа панă. (Слайд синчен вулатпăр) ‑ Çулталăкăн пур вăхăчĕ те илемлĕ. (Пурте пĕрле калаççĕ) ‑ Çуркуннехи уйăхсем: пуш, ака, çу. ‑ Хĕллехи уйăхсем: раштав, кăрлач, нарăс. ‑ Çуллахи уйăхсем: çĕртме, утă, çурла. ‑ Кĕркуннехи уйăхсем: авăн, юпа, чӳк. Кĕрхи уйăхсем: авăн, юпа, чӳк. Йывăç çулçисем сарă, хĕрлĕ тĕслĕ. Час-часах çумăр çăвать. Кайăксем кантăра вĕçсе каяççĕ. Çынсем кăмпана çӳреççĕ. Ачасем шкула çӳреççĕ. Çуллахи уйăхсем: çĕртме, утă, çурла. Çанталăк вĕри. Ачасем шыва кĕреççĕ. Вăрманта çырла пуçтараççĕ. Кӳлĕре пулă тытаççĕ. Çуркунне – илемлĕ вăхăт. Сарă хĕвел пăхать. Çырмара шыв шăнкăртатса юхать. Кайăксем юрлаççĕ. Тĕрлĕ чечексем ӳсеççĕ. Йывăç-курăк ешерет.

	урамра çунашкапа, йĕлтерпе ярăнаççĕ. Юрпа выляççĕ.	
IV. Çĕнĕ темăпа ĕçлесси **Кĕнекепе ĕçлесси** **Çыру ĕçĕ** **Хĕвеллĕ кластер тăвасси**	1) Диалога тĕрĕс вулăр. Хăвăр диалог тăвăр. *1-мĕш ушкăн* – Маша, сана çулталăкан хăш вăхăчĕ килешет? – Çуркунне. – Мĕншĕн? – Мĕншĕн тесен çуркунне кайăксем вĕçсе килеççĕ. Вĕсем илемлĕ юрлаççĕ. *2-мĕш ушкăн* – Мана çулла килĕшет, мĕншĕн тесен эпĕ шыва кĕме çӳретĕп. 2) 2-мĕш хăнăхтару – Чарăну паллисене мĕншĕн лартнă? *Пĕтемлетӳ:* союзсăр çыхăнакан пĕр йышши членсем хушшине яланах запятой лартаççĕ. 3) Предложенисене чăвашла куçар. – В саду растут сливы, груши, яблони. – Падают на землю желтые, красные листья. – Ели, сосны всегда зеленые. – Скворцы, ласточки, соловьи улетели на юг. *1-мĕш ушкăн* ÇУРКУННЕ ырă, ешĕл, ăшă, илемлĕ, хĕвеллĕ	*3-мĕш ушкăн* – Мана кĕркунне килĕшет, мĕншĕн тесен эпир кăмпана çуретпĕр. *4-мĕш ушкăн* –Маша, сана çулталăкан хăш вахăчĕ килĕшет? – Хĕлле. – Мĕншĕн? – Мĕншĕн тесен хĕлле эпĕ урамра йелтĕрпе, çунашкапа ярăнатăп. – Пĕр йышши членсем хушшине запятой лартнă. – Садра грушăсем, сливăсем, улмуççисем ӳсеççĕ. – Сарă, хĕрлĕ çӳлçăсем çĕр çине ӳкеççĕ. – Чăрăшсем, хырсем яланах симĕс. – Шăнкăрчсем, чĕкеçсем, шăпчăксем кăнтăра вĕçсе кайнă. *3-мĕш ушкăн* КĔРКУННЕ

Тахтав саманчĕ, куҫа кантарни **Текстпа ĕҫлесси**	*2-мĕш ушкăн* ҪУЛЛА ырă, ăшă, чечеклĕ, шăрăх «Сăмсапа ӳкеретпĕр» вăйă. 1) Учитель вулавĕ 2) Ачасем ăшра вулаҫҫĕ 3) Словарь ĕҫĕ (интерктивлă доска ҫинче панă сăмахсене вырăсла пĕлтерĕшпе ҫыхăнтарни) хĕрелме пуҫлать – начинает румяниться пиҫсе ҫитеҫҫĕ – созревают наркамашлă – ядовитый икшерĕн вырнаҫнă – расположены по две кашкăр ҫырли – крушина кĕтмел – брусника шур ҫырли – клюква 4) Калава пайăн-пайăн вуласа ăнланасси. 5) Ыйтусем ҫине хуравлаттарасси. Ҫак предложенисене текстран тупăр. – Крушина созревает. – Бабушка, можно ли есть эти ягоды ? – Его ягоды красивые, но ядовитые. – Эти ягоды нельзя трогать, собирать, есть – сказала бабушка.	пуян, тулăх, ҫумăрлă, ылтăн, хура *4-мĕш ушкăн* ХĔЛЛЕ сивĕ, юрлă, илемлĕ, шартлама, хаяр (Ачасем ура ҫине тăраҫҫĕ, куҫа хупса сăмсапа хĕвел, чечек, ҫулҫă «ӳкереҫҫĕ».) Ҫенĕ сăмахсене ҫурма сасăпа пурте пĕрле вулатпăр, 2-3 предложени тупатпăр. – Кашкăр ҫырли пиҫсе ҫитет.

	– Ку калав мĕне вĕрентет? 6) Наркăмăшлă çырласенчен тата хашĕсене пĕлетĕр? 7) Калава кам каласа пама пултарать? (1-2 ачаран ыйтатăп)	– Кукамай, ку çырласене çиме юрать-и? –Унăн çырлисем илемлĕ, анчах наркăмăшлă. – Çак çырласене тытма, татма, çиме юрамасть, - терĕ пире кукамай. *Пĕтемлетӳ:* наркăмăшлă çырласене çиме юрамасть, вĕсем çынна чирлетеççĕ.
V. Вĕреннине çирĕплетни **Çыру ĕçĕ** **Тупмали юмахсемпе ĕслени** (килнĕ хăнасемпе ĕслетĕп)	Кашкăр çырли çинчен синквэйн тăватпăр. (Ачасем умĕнче схемăсем выртаççĕ.) СИНКВЕЙН япала ячĕ 2 паллă ячĕ 3 глагол предложени метафора (Хитре ешчĕкрен хăнасем чечексем туртса кăлараççĕ. Чечексем хыçне тупмалли юмахсем çырнă. Тупсăмне пĕлсен парнине хăйсем валли илеççĕ). 1) Тӳпере пин-пин шăрçа. (Çăлтăр) 2) Пĕри çутă, тепри тĕттĕм. (Кунпа çĕр) 3) Сар пике кулли тĕнче тулли. (Хĕвел) 4) Асаттен çурли çап-çутă, алла тăсса илме çук. (Уйăх) 5) Хура çĕре шур пĕркенчĕк витнĕ. (Юр) 6) Çунатсăр вĕçет, урасăр чупать. (Пĕлĕт)	Кашкăр çырли наркăмăшлă, илемлĕ ӳсет, пиçет, татма юрамасть Наркăмăшлă кашкăр çырлине татма юрамасть. çут çанталăк тĕлĕнтермĕшĕ
Вайă «Вĕçсе кайрĕç кайăксем»	Кайăксен ячĕсене аса илсе çирĕплетес тĕллевпе вăйă ирттеретĕп. Вăйă пуçланиччен çапла асăрхаттаратăп: « Эпĕ вĕçен кайăксене	

	асăнатăп. Енчен те эсир вĕçен кайăксен шутне кĕмен чер чунсен е япаласен ячĕсене илтсен алă çупăр. Вĕçсе кайрĕç кайăксем: Шăнкăрчсем те шăпчăксем, *Кушаксем* те кураксем, (Ачасем алă çупаççĕ). Вĕçсе кайрĕç кайăксем: Тăрисем те, чĕкеçсем, Куккуксем те, *хурăнсем,* Вĕçсе кайрĕç кайăксем: *Кашкăрсем* те *мулкачсем,* Вăйă пĕтрĕ тупата. – Ачасем, мулкач мĕн шутне кĕрет?	– Мулкач чĕр чун шутланать.
Тест ирттерни **Тест результачĕсене тĕрĕслени**	Панă предложенисенчи ĕçсем хăçан пулнине тĕрĕс палартнă пулсан «+» паллăпа, тĕрĕс мар пулсан «-» паллăпа палăртса пыраççĕ. (Хут листисем валеçсе паратăп) Слайд *йăнăш çук – «5»* *1 йанаш – «4»* *2 йăнаш – «3»* *3 йăнăшран ытла – «2»*	1. Хĕлле ачасем çырла, чечек пуçтараççĕ, шыва кĕреççĕ. (-) 2. Çулла ачасем йĕлтĕрпе, çунашкапа, конькиме ярăнаççĕ, юрпа выляççĕ. (-) 3. Çуркунне ачасем кимĕсем яраççĕ. (+) 4. Упа хĕлле шăтăкра çывăрать. (+) 5. Кĕркунне йывăççсем çаралаççĕ. (+)

Сăвă итлесе пĕтĕмлетӳ тăватпăр	– Ку сăвва сире валли эпĕ çырнă. Ку сăвă «Асамат & Шевле” журналта пичетленнĕ. Сăвă ячĕ «Тăван тавралăх». Сăввине Катя вуласа парать. *Пĕтĕмлетӳ:* çулталăкăн пур вăхăчĕ те хăйне май илемлĕ. Кĕркунне çумăр час-часах çусан вăрманта кăмпа нумай пулать. Хĕлле час-часах юр çусан çĕр нӳрлĕ пулать. Пахча çимĕç тулăх пулать. Çулла вĕри чух шыва кĕме, хĕвел çинче хĕртĕнме аван. Ылтăн керкунне вара хайĕн илемĕпе пурне та савăнтарать.	(Ачасем сăвва итлесе презентаци пăхаççĕ.) Пурте пĕрле калатпăр: çулталăкăн пур вăхăчĕ те илемлĕ.
VI. Рефлекси. Урокри ĕçе хаклани, пĕтĕмлетни	– Ачасем, парта çинче хĕвел ӳкернĕ карточăпа çумăр пĕлĕчесене куратăр. Хĕвел вăл – лайăх кăмăла пĕлтерет, çумăр – начаррине. Урок вĕçенче сирĕн камăлу еплерех, карточкăсене çĕклесе кăтартăр.	– Ачасем хĕвел ӳкернĕ карточкăна е çумăр пĕлĕчĕсене çĕклесе кăтартаççĕ.
	Ачасем слайдра панă предложенисемпе усă курса хайсен шухăш-кăмăлĕсене палăртаççĕ. *Пĕтĕмлетӳ:* Мана урокра_________ килĕшрĕ. Урокра ________кăсăклă пулчĕ. Паян урокра çĕннине_________пĕлтĕм. Эпĕ ________________ ас туса юлтăм. Урокра мана ____________тĕлĕнтерчĕ. Ман шутпа, чи кирли _______ пулчĕ. Эпĕ малашне ________ усă курăп.____ – Ачасем, халĕ сирĕн хăвăрăн урокри ĕçе хакламалла пулать. 1) эпĕ пурне те ăнлантăм, вĕреннĕ темăна тепĕр	Ачасем карточкăсем çĕклесе кăтартаççĕ. (1 е 2, е 3).

	çынна та каласа пама пултаратăп. 2) эпĕ пурне те ăнлантăм, анчах та темăна тепĕр çынна каласа пама пултараймастăп. 3) вĕреннĕ темăна тепĕр хутчен пăхса тухмалла.	
VII. Киле ĕç парасси	1) «Юратнă çулталăк вăхăчĕ» ятлă калав çыр. 2) Ӳкерчĕк хатĕрле. 3) Калав тăрăх презентаци ту. 4) Синквейн çыр.	
VIII. Урока вĕçлени	– Пурте ура çине тăтăмăр. – Сывă пулăр! Сывă пулăр! Яланах хаваслă пулăр! Яланах илемлĕ пулăр! Яланах телейле пулар! Сывă пулăр! Сывă пулăр!	Пурте пĕрле калаççĕ .